6433
57-25



А. КОНОНОВ

# ЧАПАЕВ ÇИНЧЕН

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1957

ШКУЛ БИБЛИОТЕКИ

А. КОНОНОВ

# ЧАПАЕВ ÇИНЧЕН



(*Калавсем*)

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Чăваш АССР
Государство издательстви
Шупашкар — 1957

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ОБЯЗАТ... ПЛЯР
Д... СИ
Чувашской Книжной Палаты
13 февраля 1957 г.
№ 47



## ВЯЗОВКĂРА ПУЛСА ИРТНĔ ĔÇ

Вязовка ялĕн тусанлă урамĕнче пилĕк юланут курăнса кайрĕ. Малта, илемлĕ çӳрен лаша çинче, çар гимнастерки тăхăннă çын сиктерсе пырать.

Ялти ачасем ăна тӳрех палласа илчĕç:

— Чапай... Чапай килчĕ!

Çӳлĕ чус хапхаллă кил тĕлĕнче юланутсем чарăнчĕç.

Хапхаран пĕр çичĕ çулхи арçын ача чупса тухрĕ.

— Атте,—кăшкăрса ячĕ вăл,—пирĕн патра ярмарка!

— Куртăм, ывăлăм,—терĕ ăна Чапаев, йĕнер çинчен сиксе анса.

Вăл пĕвĕпе çӳлĕ мар, анчах хитре, патвар кĕлеткеллĕ. Чĕн пиçиххисемпе туртса çыхнă симĕс гимнастерка ун çинче питĕ килĕшӳллĕ ларать. Пиçиххийĕ çумĕнче, сылтăм енче, револьвер çакăнса тăрать, сулахай енче—кĕмĕллесе илемлетнĕ хĕç.



Вăл мăйăхĕсене шăлкаларĕ те кăвак та таса куçĕсемпе площаделле тинкерчĕ.

Площадьре утă тиенĕ лавсем тăнă. Праçниксене çеç тухмалли, куçа йăмăхтаракан кофтăсем тăхăннă хĕрсем, алла-аллăн тытăнса, уткаласа çӳренĕ. Чӳлмексем сутма ютран килнĕ çын кăшкăрсах хăйĕн таварне мухтанă. Хут купăс хаваслă ташă кĕвви шăрантарнă.

— Ну, мĕнех ĕнтĕ, пӳрте кĕрĕпĕр, Бубенец,— терĕ Чапаев.

Унтан юланутçăсенчен чи çамрăкки еннелле çаврăнчĕ те:

— Петя, лашасене килкартине кĕртсе тăрат,— терĕ.



Килнисенчен тăваттăшĕ пӳрте кĕчĕç, пиллĕкмĕшĕ, лашисене чĕлпĕр вĕççĕн тытса, килкартинелле утрĕ.

Пӳрте кĕрсен, Чапаев сĕтел çинчи кринкăран хăвăрт кăна пĕр стакан сĕт тултарса ĕçрĕ. Унтан кринкăна хăйпе пĕрле килнисене шутарса пачĕ.

Вĕт-шак ачасем, сĕтел патнелле йăпшăнса, хăнасене куç илмесĕр пăхрĕç.

Алăкра сарлака хулпуççиллĕ, кăтра сухаллă старик курăнчĕ.

— Сывлăх сунатăп, Василий!—терĕ вăл.—Çаплах çапăçатăн пулать?

Чапаев çемçен кулса илчĕ те:

— Çапăçатăп!—терĕ.

Старик халь килнисене пурне те алă тытса тухрĕ те сак çине ларчĕ.

— Эсĕ тусан мăкăрлантарса урампа иртнĕ чух эпĕ ярмăркăраччĕ. Сана, ывăлăм, инçетренех палласа илтĕм.

— Ну, мĕнле, кăçал ярмарка ăнăçлă пулчĕ-и?—ыйтрĕ старикрен халь килнисенчен пĕри, Бубенец ятли.

— Мĕнле калас... Палланисенчен никамах та курмарăм. Пуринчен ытла темле ют çынсем, инçетрен килнисем.

Бубенец кăмăлсăрланнă пек пулчĕ:

— Инçетрисен Вязовкăна мĕн тума килмелле вара?—Вăл Чапаев еннелле çаврăнчĕ те:—Василий Иванович, уездра лăпкă мар,—терĕ.—Кĕтмен хăнасем—шуррисем—килсе ан тухчăр. Эпир хамăр отрядран ытла инçе уйрăлса кайрăмăр.

Чапаев лăпкăн çеç тавăрса каларĕ:

— Ниушлĕ вара ман хамăн ачасене те килсе курма юрамасть? Акă, ирччен хăна пулатпăр та каллех похода тухса каятпăр.

Вăл чӳрече патне пычĕ те урамалла пăхма тытăнчĕ. Урампа утă тиенĕ пысăк лавсем вăраххăн иртеççĕ. Пĕр лавĕ хапхаран инçех те мар чарăнса тăчĕ.

— Кил-ха кунта, Бубенец,—чĕнчĕ Чапаев.—Утă лавĕсем, теме, кăмăла кайсах пĕтмеççĕ мана.

Бубенец чӳрече витĕр пăхрĕ те тӳрех револьверне ярса тытрĕ.

Чапаев та револьвер кăларчĕ, хĕçне тĕрĕслерĕ.

Утă лавĕ хыçĕнчен винтовка кĕпçисем, такамсен усал та хаяр сăнĕсем курăнчĕç.

— Выртăр урайне!—кăшкăрчĕ Чапаев хăйĕн ачисене.

Вăл кĕçĕн ывăлне ярса тытрĕ те чӳречерен аяккарах вырттарчĕ. Иккĕшĕ, аслăраххисем, унпа юнашар выртрĕç.

Чапаев Бубенец еннелле хăвăрт çаврăнса тăчĕ.

— Ну, кусем ман пуçа çиме килчĕç пулсан...— терĕ вăл, анчах каласа пĕтереймерĕ: урамран пăшал сассисем илтĕнчĕç.

Юнашар пӳлĕмри чӳрече кантăкĕсем чăнкăртатса урайне тăкăнчĕç.

Петя ăçта тата?—кăшкăрчĕ Чапаев.

Анчах Петр Исаевпа тепĕр икĕ боец, наганĕсене кăларса, алăк патне тăнă та иккен.

— Василий Иванович,—терĕ Петр васкавлăн,— эпĕ лашасен йĕнерĕсене хывман. Лашасем патне çеç çитсе ӳкесчĕ пирĕн.

— Çитетпĕр!

Петр Исаев пĕр çирĕм икĕ çулхи йĕкĕт. Вăл Чапаев çумĕнче хушнă ĕçсене туса тăраканни пулнă, çавăнпа та унран ниçта та юлман, сахал мар çапăçусенче пулса курнă.

Каллех пăшал сассисем кĕрлесе кайрĕç, унтан самантлăха шăп пулчĕ, вара такамăн хăйăлтатакан сасси хыттăн çухăрса ячĕ:

— Ту-ух! Ту-ух, Чапай!

Халĕ пиллĕкĕшĕ те, аллисене револьверсем тытса, чӳречесемпе алăкĕсем патĕнче тăчĕç.

Хапхаран такамăн хĕрлĕ мăйăхлă пуçĕ курăнсанах, пӳрт чӳречисенчен пĕр харăс персе яни илтĕнчĕ. Хапхаран кĕрекенни çухалчĕ.

— Халех килкартине!—хушрĕ Чапаев.

Чапаев çыннисем килкартине сиксе тухрĕç, пӳрт çумне лăпчăнчĕç те пеме тытăнчĕç.

Чапаев ашшĕ те килкартине тухнă-мĕн.

— Хапха патне кайса тăр,—хушрĕ ăна Василий Иванович:—Кирлĕ пулсан, команда парсанах уçса яратăн.

Тапăнакансем халĕ хапха патнех пымарĕç. Вĕсем аякран кăшкăрчĕç:

— Ту-ух! Ту-ух хăвăртрах!..

Унтан вĕсем утă лавĕсем патĕнче пухăнчĕç те, мĕнле майпа, пӳрте пур енчен те тивертсе ярса, чапаевецсене тĕтĕрсе кăларасси çинчен канашлама тытăнчĕç.

Çав вăхăтра Чапаев, пĕшкĕнсе, хăйĕн лаши патне чупса пычĕ, йĕнер çине сиксе ларчĕ. Ун хыççăн ыттисем те лашасем патне ыткăнчĕç.

— Хапхана уç!—шăппăнрах команда пачĕ те Чапаев, хĕçне йĕннинчен туртса кăларчĕ; сулахай аллинче—револьвер.

Хапха уçăлса кайрĕ. Пилĕк юланут урамалла вирхĕнсе тухрĕ те тăшмансен ушкăнне чăмрĕ. Лешсем хăйсем çине тапăнасса пачах кĕтмен пулнă.

Сывлăшра хĕçсем ялтăртатса илчĕç, аманнисем кăшкăрни, йынăшни илтĕнчĕ. Шурă гвардеецсем, утă лавĕсем хыçне пытанма пикенсе, каялла чакса кайрĕç.

Çав вăхăтра Чапаев патне тимĕр кăвак лаша утланнă офицер ыткăнса пычĕ. Вăл ĕнтĕ Чапаев пуçĕ тĕлнех хĕçне çĕклерĕ, анчах Чапаев питĕ меллĕн пăрăнса тăчĕ, лашине чĕвен тăратрĕ те револьверпа персе ячĕ.

Офицер сулăнса кайрĕ, лаши çилхинчен çавăрса

тытрĕ, анчах тытăнса тăраймарĕ те йĕнер çинчен çĕрелле персе те ӳкрĕ.

Петр айĕнчи лашана вĕлерчĕç. Лаши çĕре йывăррăн тĕшĕрĕлсе анчĕ, Петр урине лапчăтса хучĕ.

Чапаев çакна курсах тăнă.

Вăл лаши çинчен сиксе анчĕ, Исаев патне чупса пырса, ăна лаша айĕнчен урине кăларма пулăшрĕ. Унтан Бубенеца пулăшма ыткăнчĕ. Шăпах вăхăтра çитрĕ: Бубенеца тăшмансем хупăрласа илнĕ. Вăл наганри пулисене пĕтĕмпех персе пĕтернĕ те хĕçĕпе çеç хӳтĕленнĕ. Унăн çамки тăрăх, çинçе йĕр хăварса, юн юхнă.

Чапаев енчен енне турарĕ çех, ун хыççăн Петр шуррисене наганпа пере-пере ӳкерсе пычĕ.

Тăшмансем тӳссе тăраймарĕç, тарма тытăнчĕç.

Пилĕк юланут вĕсене нумайччен хăваларĕ; унтан каялла таврăнчĕç. Исаев никамран малтан утă лавĕ патне ыткăнчĕ, хĕçне утă ăшне тăрăнтарчĕ. Хĕç темле хытă япала çине тăрăнса чăнклатрĕ. Боецсем утта сирсе пăрахрĕç те ун айĕнче пулемет тупрĕç.





## ХĔРЛĔ АВТОМОБИЛЬ

Çеçенхирти çул тăрăх хĕрлĕ автомобиль ыткăнса пырать.

Ун çинче иккĕн ларнă: шофер та Чапаев.

Чапаев, машина борчĕ урлă карăнса, инçетелле питĕ тимлĕн сăнаса пăхать. Ун хыçĕнче пулемет пур, ăна кĕпçипе каялла çавăрса лартнă.

Таврара хĕвелпе çунса ĕннĕ тип-тикĕс çеçенхир сарăлать. Малта, инçетре, чиркӳ тăрри курăнать.

Шофер машинăна хытăрах васкатрĕ.

— Ну, часах санпа чей ĕçетпĕр,—терĕ Чапаев.

Шофер пуçне çĕклерĕ.

— Чейĕ халь питĕ аван пулмалла, Чапаев юлташ,—терĕ вăл хавассăн.

Часах хресчен пÿрчĕсем те курăнса кайрĕç.

Тепрер минутран машина ял урамне кĕрлеттерсе те кĕчĕ.

Ешĕл пахчасем, чалăшса кайнă çатан картасем, такамăн крыльци умĕнче ÿсекен сап-сарă хĕвелçаврăнăшсем вĕлтлетсе юлчĕç. Машина хыçĕнче пĕлĕт пек тусан йăсăрланать.

Чиркÿ патĕнчи площадьре шофер машинăна чарса тăратрĕ.

Чапаев ура çине тăчĕ.

— Асту, ачасене тупă çывăхне ан яр,—пуçĕпе пулемет еннелле сулса кăтартрĕ вăл.

Урамра темле пĕр хĕрарăм курăнчĕ. Чапаев ăна:

— Ял Совечĕ ăçта кунта сирĕн?—тесе кăшкăрчĕ.

Сехри хăпнă хĕрарăм аллисемпе хăлаçланса илчĕ те çавăнтах куçран çухалчĕ.

Чапаев вара йĕри-тавралла пăхрĕ, кунта ĕççем ырах маррине тавçăрса илчĕ. Чиркÿ патĕнчен темле погонлă çын автомобиль çине тинкерсе пăхать. Çав çын шурă офицер иккенне пĕлме пысăк ăс кирлĕ мар. Вăл, машина çинчен куç илмесĕрех, пиçиххинчен çакăнса тăракан кобурине вĕçертрĕ те наганне кăларчĕ.

Тăкăрлăкран виçĕ салтак тухрĕ.

— Ну, юлташ, çавăр тавай,—терĕ Чапаев хуллен,—çавăрттар моторна: ялта шуррисем.

Шофер сивĕнсех çитмен мотора ĕçлеттерме пикенчĕ, Чапаев пулемет çумне йăпшăнчĕ. Пĕрре туртнипех вăл ăна чиркÿ еннелле çавăрчĕ те тĕллерĕ.

Шофер, мĕн май килнĕ таран çĕр çумнерех кукленсе, мотор ручкине пĕтĕм вăйпа çаврăнчĕ.

— Хускатса яма ĕлкĕреймесен—пĕтрĕмĕр эпир,— терĕ Чапаев.

Çав вăхăтра чиркӳ патĕнче револьвер сасси кĕрĕслетрĕ. Пуля шофер хăлхи тĕлĕнченех шăхăрса иртрĕ. Анчах шофер мотора ĕçе яма ĕлкĕрчĕ те кабинăна сиксе ларчĕ.

Машина тăрук малалла туртăнчĕ—шофер малтанах пысăк хăвăртлăх панă иккен.

Вĕсем патнелле пур енчен те шуррисем чупа пуçларĕç. Анчах та часах чарăнса тăчĕç: машина пĕр еннелле карр! çаврăнчĕ те,— Чапаев пулеметпа пеме тытăнчĕ.

Пульăсем урам талкăшĕпех саланчĕç.

Ял вĕçĕнчен утлă шурă гвардеецсем сиккипе килни курăнса кайрĕ.

Лакăмсем тĕлĕнче машина тӳсме çук силленчĕ. Чапаев, пулемет çумне йăпшăнса, таттисĕр персе тăчĕ.

Каллех ешĕл пахчасем, кивĕ çатан картасем вĕлтлетсе иртрĕç... Акă ĕнтĕ, çеçенхирти армутин йӳçĕ



шăрши те сăмсана çапрĕ... Хыçалтан вара шуррисен юланутçисем ыткăнса пычĕç.

Шофер пуçне руль патнех пĕкнĕ те çаврăнса пăхма та хăрать. Кашни самантрах вăл шинăна пуля тивсе шăтарасран пăшăрханчĕ — шăтарсан пĕтĕмпех пĕтрĕ вара. Анчах ун хыçĕнче, машинăн пĕтĕм кузовне чĕтрентерсе, Чапаев пулемечĕ çеç вĕçĕмсĕр тăкăртатрĕ. Унтан сасартăк шăп пулчĕ.

Шофер Чапаевăн кăштах хăйăлтата пуçланă сассине илтрĕ:

— Патронсем пĕтрĕç.

Автомобиль тикĕс çеçенхире те тухрĕ ĕнтĕ. Шурă кавалеристсем нумай кая юлнăччĕ. Вара вĕсем вăйлă машинăна хăваласа çитес çуккине хăйсемех ăнланчĕç те—вилнисемпе аманнисене пуçтарма каялла кайрĕç.

Чапаев сасартăк кулса ячĕ:

— Акă чей ĕçрĕмĕр те!

Шофер илтеймерĕ: машина çав тери хăвăрт пычĕ, хăлхара çил çеç шăхăрса тăчĕ.

Машина хуллентерех кайма тытăнсан вара, шофер çакна илтрĕ:



По морям, по волнам,
Нынче—здесь, завтра—там...
По моря-ам...

Шофер каялла çавранса пăхрĕ. Чапаев ывăç тупанне пулеметăн вĕри кĕпçи çине хунă та, кăвак куçĕсене хĕссе, шухăша кайса, юрласа пырать.





## КЛИНЦОВКАРИ АЧАСЕМ

Пĕррехинче Чапаев разведкăна каять. Унпа пĕрле тепĕр тăвата боец юланутпа пыраççĕ. Хыçалта, пулемет вырнаçтарнă тачанка çинче, Петр Исаевпа Чапаевăн сакăр çулхи ывăлĕ Аркадий лараççĕ.

Каç пулать. Чапаевецсем малта пысăках мар вăрман тата унпа юнашар пĕчĕк юханшыв кураççĕ. Инçетре, юханшыв леш енче, Клинцовка ятлă ял ларать.

Шыв хĕрринче пĕр вăтăр лаша курăк çисе çӳрет. Лашисене ачасем кĕтеççĕ. Вĕсен сехрине хăпартас мар тесе, Чапаев ачасем патне малтан хăйĕн ывăлне, Аркадие, ярать.

— Эс кам?—ыйтаççĕ ачасем Аркадирен.

— Чапаев,—тет лешĕ.

Ачасем кулса яраççĕ:

— Çапла пулмасăр! Чапаев вăл темĕн пысăкăш лашапа çӳрет пулĕ-ха, тата унăн хĕçĕ те кĕмĕл.

Çав вăхăтра Василий Иванович инçетрен кăшкăрать:

— Ачасем! Эсир Клинцовкăран-и?

— Клинцовкăран,—теççĕ те ачасем, майĕпен çывăхарах пыраççĕ.

— Мĕн тăватăр эсир кунта?

— Эпир лашасене хуралл атпăр,—тăшмансем хăваласа кайма пултараççĕ.

— Ялта шуррисем эппин?

— Шуррисем.

— Нумайăн-и вĕсем?

— Нумайăн.

Чапаевецсем, лашисем çинчен анса, канашлама тытăнаççĕ.



Йывăççен мĕлкисем вăрăмланнăçемĕн вăрăмланса пыраççĕ, хĕвел йывăç тăррисем хыçнелле сулăнать.

Ачасем кăвайт чĕртме туратсем хуçнă пулнă ĕнтĕ, анчах пулемет курсан ун çинчен мансах каяççĕ. Вĕсем тачанка çывăхнех пырса тăраççĕ.

— Эсир хӑюллӑ ачасем-и?—ыйтать Чапаев вӗсенчен.

— Паллах, хӑюллӑ,—тавӑрать хирӗҫ чи асли, вӑл пӗр вунтӑваттӑра пулӗ ӗнтӗ.

— Ялтан шуррисене хӑваласа ярас килет-и?

— Килет.

— Ну, апла итлӗр мана,—тет Василий Иванович. Вӑл ачасене ҫӳҫе тураттисем касса вӗсен хуппине сӗвме калать.

Унтан Чапаев ҫапла хушать:

— Пӑч тӗттӗмленсе ҫитсен, лашӑрсем ҫине утланӑр та Клинцовка патнелле тӗпӗртеттерӗр. Патакӑрсемпе, хӗҫсем пек, хытӑрах сулкалӑр. Пӑшал сассисене илтсен вара, килӗрсене шӑвӑнӑр. Ӑнлантӑр-и?

— Ӑнлантӑмӑр,—теҫҫӗ ачасем.

Ҫӳҫе тураттисене хуппинчен тасатаҫҫӗ, хӗҫ тума юрӑхлисене суйлаҫҫӗ, унтан лашасем ҫине утланса ретӗн-ретӗн тӑрса тухаҫҫӗ. Ҫаксене тунӑ хушӑра пачах каҫ пулса ларать.

Ачасем, хӑйсен лашисем ҫине утланса, ял еннелле ыткӑнаҫҫӗ.

Чапаев ҫав вӑхӑтра хӑйӗн боецӗсемпе Клинцовка патне тепӗр енчен пырса тухать.

Тӗттӗмре вӑл револьверпа перет те ҫӳлелле ракета ярать. Ракета, чашкӑрса, сывлӑшалла пит ҫӳле вӗҫсе хӑпарать, вара кӑвак хӗм сирпӗтсе саланса каять.

Ыйхӑллӑ тӑшмансем урама сиксе тухаҫҫӗ, ракета ҫутинче вӗсем хӗҫсемпе сулкалакан юланутҫӑсем ыткӑнса килнине кураҫҫӗ.

Унтан ракета сӳнет те, юланутсем тӗттӗмре ҫухалаҫҫӗ.

çул-йĕре ним карттăсăр-мĕнсĕр çырма-çармасем таранчченех чухлать. Хресчен вăл, чухăн çын ачи, Саратов кĕпĕрнинчи Балашов уездĕнчен. Пĕчĕкренех ĕçе çыпçăннă. Вуниккĕре чухнех ăна пĕр купец патне панă. Лешĕ ăна тавар виçме те çынсене улталама вĕрентнĕ. Анчах Чапаева çак ĕç килĕшмен. Купец ăна çавăншăн хăваласа кăларса янă.

— Хăваласа янă?

— Лавккаран хăваласа янă çав. Чапаев мĕнлине ху пĕлетĕн. Ниушлĕ çавна тӳссе тăма пултарнă?! Вăл ун чухнех тĕрĕслĕхшĕн тăнă. Купци пуян пулнă, анчах Чапаев хăраса тăман: „Жулик эсĕ!" тенĕ ăна...

— Чăнах-и?!

— Купец вара тарăхнипе кăшт çеç çурăлса кайман. Тĕрĕслĕхе юратман вăл. „Пĕлетĕн-и, эп сана саккунпа мĕн туса хуратăп?"—тенĕ. Буржуйсен саккунĕ мĕнле-ха вăл? „Пуçне килчĕ—чунне илчĕ"—акă мĕнле вĕсен саккунĕ. „Эп сана,—кăшкăрнă купец,—килтен кăна мар, ялтан та хăваласа яратăп!" Василий Иванович ун çине пăхнă та çапла çавăрса хунă: „Çĕр çинчен пуçĕпех хăваласа яма пултараймастăн-и тата? Ку та юрĕ эппин. Эпĕ—курса тăр—сана хăвна хăваласа яратăп акă, вăхăт çиттĕр çеç!" Халĕ çав вăхăт çитрĕ пулас ĕнтĕ!.. Ак хăçантанпа çапăçать Чапаев буржуйсемпе...

Калаçу пĕр вăхăтлăха чарăннă.

Фурманов кăвайт патне кукленнĕ те, кăвар илсе, чĕлĕмне тивертнĕ.

Пĕр красноармеец çав вăхăтра хуллен кăна:

— Еремеев, сехет çинчен каласа пар-ха,—тенĕ.

Çарлака хулпуççиллĕ боец, пысăк хура çĕлĕк тăхăннăскер:

— Ун çинчен эпĕ каласа панă ĕнтĕ...—тенĕ.

— А эсĕ тепре кала... Çак юлташ илтмен те пулĕ,—красноармеец пуçĕпе Фурманов еннелле сулса илнĕ.

Еремеев пĕр хушă чĕнмесĕр ларнă та хуллен калама пуçланă:

— Ку вăл шурă казаксене Сломихински станицинчен çапса кăларнă чух пулчĕ. Станица патне те çитейменччĕ-ха эпир—мана пуçран амантрĕç. Ахăртнех, пĕр вунă минута яхăн эпĕ тăнсăр выртнă пулас. Кайран мана çыхса ячĕç, эпĕ винтовкăна илтĕм те каллех малалла кайрăм. Утатăп, анчах хам сулкаланатăп. Пĕлĕт çинелле пăхатăп та—хĕвел те мана хура тĕслĕ курăнать.

— Халтан кайрăн эппин?

— Халтан кайрăм çав. Ытла ыратнăшăн та мар, юн нумай юхнипе пулас. Утатăп, енчен енне сулкаланатăп. Винтовка çине тайăнатăп. Нумай утнă-и эпĕ, сахал-и—пĕлместĕп. Пăхатăп та—ман умра Чапаев. „Эс ăçта каятăн?—ыйтать хайхи.—Санăн госпитале кайса, канас пулать, суранна сыватмалла“. Пăхрăм та эпĕ Василий Иванович çине, чуна хаваслăрах та пулса кайрĕ. Хыттăн тавăрса каларăм: „Çук, Чапаев юлташ,—терĕм,—канма мана иртерех-ха“. Пăхрĕ вăл ман çине, нимĕн те шарламарĕ. Унтан кĕсйинчен сехет кăларчĕ те ман енне тăсрĕ: „Чиксе çӳре! Асăн Чапаева“. Эпĕ малтанах аптраса ӳкрĕм, сехете илместĕп: „Мĕн эсĕ, Василий Иванович! Сехетӳ хăвна кирлĕ...“ Вăл вара çиленсе кайрĕ: „Ил, тетĕп, наградăна тивĕçлĕ эсĕ! Чапаев хăйĕн сăмахне нихçан та улăштарман!“

— Малалла мĕн пулчĕ?—ыйтнă Фурманов.

— Малалла... Сехете илтĕм те çапăçăва кайрăм.

Витрери шыв вĕреме кĕнĕ. Еремеев кăвайтран ĕннĕ çăкăр хытти кăларнă та ăна витрене янă—ку ĕнтĕ „чей пĕçерни“ пулнă.

— Чапаева эсĕ нумайранпа пĕлетĕн-и?—каллех ыйтнă Фурманов Еремеевран.

— Нумайранпа. Тепĕр тесен, тĕнчипех пĕлеççĕ пулĕ ăна. Чапаев ячĕ-сумĕ инçене кайнă.

Кăвайт патĕнчи красноармеецсенчен пĕри хускан-каласа илнĕ те çапла каланă:

— Тепĕр чух мана çав тери тĕлĕнмелле пек туйă-нать: пирĕн пек ахаль çынах хăй, анчах, пăх-ха, ăçта çитнĕ...

— Ахальли ахаль çынах та, çапах хăйне уйрăм çын çав. Эпĕ хам акă платник. Чапаев та платник. Çапла пулса тухать: манпа иксĕмĕр пек çынсем нумай, анчах Чапаев—пĕрре кăна.

Еремеев калаçма чарăннă.

Фурманов чĕлĕм туртнă май Чапаев çинчен шухăшланă: боецсем юратаççĕ иккен ăна, хисеплеççĕ. Боецсем кăна та мар, хресченсем те юратаççĕ. Хура халăх юратать. Чапаевпа калаçса илет те вăл—тӳрех курать, ĕненет: çĕнтеретех Чапаев шургвардеецсене! Чапаев сăмах калама тухать—пурте шăп пулаççĕ. Эпир калакан ахаль сăмахсенех калать пек вăл, анчах ăна сывламасăр çăвара карса итлеççĕ.

Юратать халăх хăйĕн паттăрне.

Çамрăк красноармеец Фурмановăн шухăшĕсене татнă:

— Ĕнер эпĕ Чапаев ташланине куртăм. Пиçиххине тӳрлетрĕ, хĕçне çавăрса тытрĕ те яра пачĕ! Шпорисем чăнкăртатаççĕ те, папахи каялла ывтăнать çеç...

— Çавăнпа юратаççĕ те ăна боецсем,—тенĕ ăна хирĕç Еремеев.—Паян вăл санпа пĕр котелокран апат çиет, хут купăс каланă май санпа пĕрле ташласа илет, ыран çапăçава илсе каять—аслати пек хаяр командир. Кунта вара ăна пĕр сăмах хирĕçлейместĕн. Тата мĕн хирĕçлемелли! Унпа çапăçава кайнă чух—хăрамастăн та. Малтанах пĕлетĕн: Чапаев пĕтĕмпех шухăшласа хунă, карттă çинче виçнĕ, паллă тунă. Çапăçура йăнăш пулмасть унăн.

Ĕнтĕ тул çутăлма пуçланă.

Фурманов кăвайт патĕнчен пăрăннă. Красноармеецсен калаçăвне итлесех пĕтерейменшĕн кăшт пăшăрханнă вăл. Красноармеецсем те вăл кам иккенне пĕлеймесĕрех юлчĕç тесе шутланă.

Анчах вăл кайсанах Еремеев çапла каласа хунă:

— Ку вăл—çĕнĕ комиссар. Хушамачĕ—Фурман. Василий Иванович ăна килĕштернĕ, анчах тӳрех мар. Ку килнĕ те: „Акă манăн хутсем",—тенĕ. Чапаев: „Эпĕ командирпа комиссара çапăçура мĕнлине кура йышăнатăп,—тесе хунă.—Хучĕсем вĕсем—хутсем, эсĕ хăвна пульăсем айĕнче кăтарт". Ну, халь ĕнтĕ Василий Иванович комиссара йышăннă. Халь вĕсем тусла-юлташла пурăнаççĕ.

Красноармеецсем калаçма чарăннă та итлеме тытăннă.

— Юрлать...—тенĕ хуллен пĕр качча.—Ух, юрра юратать те çав!

Чăнах та, пӳртре юрă юрласа янă.

Ку вăл Чапаев чи юратакан юрă пулнă: „**Сижу за решеткой в темнице сырой**".

Юррине Василий Иванович хăй пуçланă.

Командирсемпе красноармеецсем унпа пĕрле пĕр çын пек юрланă: дивизире ку юрра пурте пĕлнĕ.

Анчах нумай юрламан.

Чапаев çутăлас умĕн командирсемпе малти позицисене кайма хатĕрленнĕ: унта пысăк çапăçу пуласса кĕтнĕ.

Чапаев хăйĕн лаши патне пынă та вăшт кăна йĕнер çине сиксе ларнă.

Çеçенхиртен уçă çил вĕрнĕ, хăйпе вăл чечексемпе çулнă курăксен шăршине илсе килнĕ.

Кăштах сивĕннĕ сывлăмлă çĕр çине тин хăпаракан хĕвел пăхнă.





## ÇАПĂÇУ

Малта станица курăнса ларнă.

Вăл Уралти шурă казаксен аллинче пулнă. Станицăн сулахай енче, сăртсем çинче, çӳлĕ çил арманĕсем ларнă.

Чапаевецсем виçĕ енчен тапăнса пынă: икĕ полк станицăна айккисенчен хупăрланă,варрипе, чи хăрушă вырăнпа, Иваново-Вознесенскри рабочисен полкĕ пынă.

Шуррисем пулеметсемпе иртерех пеме тытăннă, чапаевецсем кун пек пулса тухасса кĕтменччĕ. Анчах пульăсем станица енчен вĕçмен, тăшман пулемечĕсем

станица тулащӗнчен, сăртсем çинчи çӳлӗ çил арманӗсем тăрринчен, пенӗ.

Чапаев йӗнер пускăчи çине тăнă та биноклыпе тинкерсе пăхнă. Унăн айӗнчи çӳрен ут тăпăртатнă кăна, ниепле те пӗр вырăнта тăра пӗлмен. Чапаев ăна çавăрнă та йывăр орудисем еннелле сиктернӗ. Сиккипе пынă çӗртех батарея командирне аллипе сулнă, лешӗ вара приказ илме чупса пынă.

— Çил арманӗсем çине перӗр!—кăшкăрнă Чапаев.

Командир часрах хăйӗн батарейи патне чупнă. Халӗ ӗнтӗ орудисем ик енчен те кӗрлесе кайнă. Çак вăхăтра пӗлӗт те çурăлса каяс пек туйăннă.

Чапаев ӗнтӗ вăрçă хирӗн тепӗр вӗçӗнче ыткăнса çӳренӗ. Унăн хура бурки çил çинче çунатсем пек саркаланса пынă.

Иваново-Вознесенскран килнисем хыçра унăн сассине илтнӗ:

— Пулеметсем йӗркеллӗ-и? Патронсем çитеççӗ-и?..

Боецсем вара, Василий Иванович çумрах иккенне туйса, хаваслăрах пулнă, паттăрланма, Чапаев пек пулма тăрăшнă.

Çапăçу сарăлсах пынă.

Инçетре çил арманӗ çуннă—ăна пирӗн артиллери снарячӗсем тивертсе янă. Çапăçу шавӗ витӗр сăртсем енчен хытă шатăртатни илтӗннӗ: унта пулемет лентисем сике-сике çурăлнă.

Унта та кунта хура сарă çулăм капанӗсем сике-сике тухнă. Санитарсем пирвайхи аманнă çынсене пуçтарнă.

Сасартăк боецсем хытнă пек пулса тăнă: тăшман снарячӗ шăпах Чапаев тăнă вырăна ӳксе çурăлнă.

Унӑн ҫӳрен лаши чӗвен тӑнӑ та, хӑй ҫинчи ҫыннипех аяккалла сиксе ӳксе, куҫран ҫухалнӑ.

Хура тӗтӗм сирӗлсен, боецсем Василий Иванович цепь ҫуммипе тӗрӗс-тӗкелех ыткӑнса пынине курнӑ. Снаряд катӑкӗсем, ун тавра ҫумӑр пекех тӑкӑннӑ пулин те, хӑйне пӗри те тивмен иккен.

Станица енчен кӑшкӑрни, ҫухӑрни, тӑпӑртатни илтӗннӗ: ку ӗнтӗ шуррисен утлӑ ҫарӗ атакӑна хускалнӑ.

Хӗрлисен пулеметчикӗсем, пулемет ҫумне йӑпшӑнса, кӗтсе выртнӑ. Унтан команда илтӗнсе кайнӑ:

— Огонь!

Тупӑсем пӗр харӑс персе янӑ. Ҫавӑнтах пулеметсем тӑкӑртатма тытӑннӑ.

Акӑ пӗр шурӑ гвардеец тӳннӗ, тепри йӑваннӑ, аманнӑ лаша чӗвен тӑнӑ та ҫурӑм ҫинелле ҫаврӑнса ӳкнӗ. Тепӗр лаши пульӑсемпе снарядсем айӗнчех, хӑй хыҫҫӑн казак кӗлеткине сӗтӗрсе, ӑнтан кайнӑ пек ӗрӗхтерсе пынӑ. Ӳкнӗ чух казакӑн ури йӗнер пускӑчинчен вӗҫерӗнеймен пулас.

— Огонь!!

Каллех тупӑсем кӗрленӗ. Пулеметсем шатӑртатнӑ.

— Огонь!!!

Сӑрт ҫинче темӗн пысӑкӑш ҫулӑм купи ялкӑшма тытӑннӑ: пирӗн оруди тата тепӗр ҫил арманне лектернӗ иккен.

Чапаевецсем тупӑсенчен тата икӗ хутчен пӗр харӑс пенӗ. Шуррисем вара тӳссе тӑрайман—пӗрин хыҫҫӑн тепри лашисене каялла, станица еннелле, ҫаврӑннӑ.

Ҫав вӑхӑтра йывӑррӑн кӗрлени илтӗнсе кайнӑ: станицӑн сулахай енчен тӑшманӑн икӗ броневикӗ сиксе тухнӑ. Вӗсене красноармеецсен речӗсене таптаса тӑкма, тараканнисене персе пӗтерме янӑ пулнӑ.

Анчах та тăшмансем пачах кĕтмен япала пулса тухнă.

Броневиксем çывăхах çитнĕ ĕнтĕ, анчах Иваново-Вознесенск боецĕсенчен тăракан цепь вырăнтан та хускалман. Вăл кăштах ик еннелле сирĕлнĕ те броневиксене малалла ирттерсе янă. Броневиксенчен пĕри çывăхах çитсен, красноармеец Андрей Крутов ура çине сиксе тăнă та унăн кустăрмисем айне граната ывăтнă. Çав самантрах шатăртатни илтĕннĕ, броневик, хура тĕтĕмпе хупланса, чарăнса ларнă. Тепри тӳрех каялла çаврăннă.

Халĕ ĕнтĕ виçĕ çил арманĕ те çуннă. Çил çулăма ялкăштарса тăнă. Армансем çинчи пулеметсем шарлами пулнă.

Станицăран каллех тăшманăн утлă çарĕ вăркăнса тухнă. Халĕ вăл, питĕ çывăхра чухне, пехотăшăн хăрушă пулнă.

Анчах хĕрлисен цепĕнче савăнăçлăн кăшкăрнисем илтĕннĕ:

— Чапай! Чапай!..

Вăл çивĕч хĕç тытнă сылтăм аллине айккинерех янă, пĕтĕм кĕлеткипе малалла ӳпĕннĕ, эскадронран ахаль те нумай малта ыткăнса пыракан лашинчен те иртсе каясшăн пек туйăннă.

Чапаева пирĕн боецсем кăна мар, шуррисем те палланă, ăна курсан вĕсем пĕрин хыççăн тепри лашисене каялла çавăрма пуçланă.

Кăлăхах хĕçпе сулкаланă шуррисен офицерĕ. Кăлăхах чарма тăрăшнă вăл хăйĕн юланутçисене.

Тата тепĕр минутран—хăйсен утлă çарĕ хыççăн Иваново-Вознесенск боецĕсем станицăна вăркăнса кĕнĕ.

Станица урамӗ хыҫӗнче ҫеҫенхир сарӑлса выртнӑ.

Вара паттӑр боецсем инҫетре, ҫеҫенхирте, тусан мӑкӑрлантарса, юланутсем сиктерсе пынине курнӑ: кусем—хӗрлисенчен таракан шурӑ гвардеецсен юлашкийӗсем пулнӑ.





## «ЧАПАЙ ЧӖППИ»

Чапаев отрячӗ пӗр пысӑк салара каннӑ.

Василий Иванович вырнаҫнӑ пӳртпе юнашар Лагутинсен килӗ пулнӑ. Лагутинсен килйышӗнче чи кӗҫӗнни Гриша пулнӑ. Вӑл пилӗк ҫула кайнӑ.

Пӗрре Гриша пӗчченех аппӑшӗнчен вӑрттӑн Чапаев патне кайнӑ. Аппӑшӗ ӑна пысӑк пек туйӑннӑ, вӑл ӗнтӗ вунвиҫҫе кайнӑ, вӑрҫӑлла вылясшӑн пулман, тата вӑл ахаль те—хӗрача: унпа калаҫма та кичем пулнӑ.

Гриша килкартине кӗнӗ те васкамасӑр малалла утса кайнӑ.

Йӗри-тавра интереслӗ япаласем нумай пулнӑ. Витесем патӗнче йӗнерленӗ лашасем тӑнӑ, вӗсем пуҫӗсене ухнӑ, йӗвенӗсемпе чӑнкӑртаттарнӑ. Ҫийӗнчи йӗнерӗ-

сем сарӑ сӑрантан пулнӑ, пускӑчисем, казаксенни пек, ҫӳлте ҫакӑнса тӑнӑ.

Тусан ӑшӗнче пӗр автан уткаласа ҫӳренӗ. Вӑл майне мӑнкӑмӑллӑн авса хунӑ та Гриша ҫине йӑлтӑр-татакан сарӑ куҫӗпе пӑхса илнӗ.

Килкарти вӗҫӗнче, сарай патӗнче, хупахсем ӳснӗ. Эх, вӗсене ҫӳҫе хуллипе кастарасчӗ, Чапаев хӗҫне сулкаланӑ чух тӑкӑнакан шуррисем пек тӑсӑлса выртчӑр!

Анчах хупахсенчен инҫех мар, сарлака пӗрене ҫинче, Петр Исаев ларнӑ. Кӗпе ҫухавине вӑл ярханах янӑ. Хуралах панӑ хурҫӑ вӑчӑра унӑн кӑкри тӗлӗпе пӗтӗрӗнсе аннӑ, вӗҫӗнче пысӑк юнкӑ пулнӑ. Юнкине наган авринчен тыттарнӑ, наганӗ хӑй сарлака чӗн пиҫиххи хушшинчен курӑнса тӑнӑ.

Ун пуҫӗнчи папаха та питӗ хӑйне майлӑ ларнӑ. Вӑл, ӗнсе хыҫнеллех кайнӑскер, кӗҫ-вӗҫ хывӑнса ӳкес-сӗн туйӑннӑ. Папаха ҫумне пӗр енчен тепӗр еннелле хӗрлӗ хӑю ҫӗлесе лартнӑ.

Петр Исаев ӳркевлӗн атӑ кӗлипе тапкаланӑ, шпо-рипе чӑнкӑртаттаркаласа, Гриша Лагутин ҫине пӑхнӑ.

— Сирӗн ӑҫта каймалла, гражданин?—кӑшкӑрса янӑ вӑл сиввӗн.

Гриша чарӑнса тӑнӑ.

— Ӑҫта пултӑн?—хальхинче хуллентерех ыйтнӑ Петька, хӑй пӗрене ҫине майланарах ларнӑ та хура йӗнӗри вӑрӑм хӗҫне чӗркуҫҫи ҫине хунӑ.

Гриша хӑраса кайнӑ, анчах ытлашшиех мар. Вӑл ним айӑпа та кӗмен. Паян хӑйне вӑл мӗн иртенпех йӗркеллӗ тытнӑ. Сарӑ куҫлӑ автан ҫине вара аллине те ҫӗклемен.

Пĕр хушă ним чĕнмесĕр пӳрнине ĕмкелесе тăрсан, Гриша хирĕç калама хăюлăх çитернĕ:

— Настя инкепе çырмана кайса килтĕм.

— Мĕн тума?

— Кĕпе чӳхеме.

— Мĕншĕн?

Гриша ун çине куç хӳрипе чалăшшăн пăхнă. Петр Исаева вăл ĕнтĕ пĕр эрнене яхăн пĕлнĕ, анчах ăна ăнланма пултарайман: пĕрре кулать вăл, тепре тĕрлĕ ыйтусемпе асаплантарать, тепĕр чух тата сахăр та парать.

Халĕ Петр хăйĕн хĕвелпе çунса тĕссĕрленнĕ сайра куçхаршисене хаяррăн хускаткаланă.

Гришăна хăрушă пулса кайнă, анчах хĕçпăшал çакса тултарнă арçынтан уйрăлса каясси те килмен.

— Мĕншĕн?—тепĕр хут ыйтнă Исаев.

— Таса пултăр тесе,—тенĕ юлашкинчен Гриша.

— Эсĕ мĕн ятлă тата?

— Пĕлетĕн вĕт-ха: Гришка.

— Мĕншĕн Гришка?

Гриша ĕнтĕ пăшăрханма та пуçланă, анчах çав вăхăтра Петр пĕрене çинчен сиксе тăнă:

— Сывлăх сунатăп, Василий Иванович!

Гриша каялла çаврăнса пăхнă: хапха енчен пӳрт-телле Чапаев утнă. Вăл хăйĕн тусанлă аттисене хулăпа хавассăн çапкаласа пынă.

— Эй, ăмăрткайăк, мĕн тунсăхларăн?—ыйтнă вăл Гришăран.

Гриша мăшăлтатнă çеç, нимĕн те калайман.

Ун умĕнче яланхи пекех килĕшӳллĕ те илемлĕ Чапаев тăнă. Хăмăртарах чĕнсем унăн гимнастеркине хĕреслесе илнĕ, револьверĕ йывăç кобура ăшĕнче

çакăнса тăнă, атă кунчисене чĕркуççисем тĕлĕнчен çинçе чĕнсемпе çыхса лартнă.

— Санăн хĕçӳ ăçта тата? — тенĕ Гриша юлашкинчен.

— Киле хăвартăм. Хăнана пырсан—кăтартăп.

— Хăçан?

— Хăть те халех пыр. Эп сана хĕç çине утлантарса лартăп: вăл саншăн лаша та, хĕçпăшал та пулĕ.

Чапаев Гришăна аллинчен тытнă та пӳрте çавăтса кайнă.

Крыльцара тăракан часовой вĕсене çемçен кăна кулса ирттерсе янă.

Анчах, вĕсем иртсе кайсанах, килкарти урлă Гриша аппăшĕ Лида вăркăнса каçнă.

— Чапаев килчĕ-и?—хашкаса ыйтнă та вăл часовойран, крыльца çине чупса хăпарнă.

Часовой алăка винтовкăпа картланă:

— Мĕн тума кирлĕ сана Чапаев юлташ?

— Эпĕ унăн отрядне кĕрес тетĕп.

Часовой ахăлтатса кулса янă:

— Отряда? Тăхта-ха, хĕрĕм, пĕр çичĕ çул. Ӳс. Вара отряда кĕме те юрать.

— Ӳс! Ӳссе çитиччен вăрçă та пĕтет.

— Пĕтмест. Эпир сансăр тăшмана пĕтерейместпĕр.

Хĕрача сасартăк пĕшкĕннĕ те пăшал кĕпçи айĕпе алăкалла чăмнă.

— Стой!—кăшкăрнă часовой.

Чапаев пуçне кăларса крыльца çине пăхнă.

— Мĕн шавĕ ку?

— Ара, Василий Иванович, çак хĕрача чапаевец пуласшăн. Эпĕ ăна: эс пĕчĕккĕ-ха, малтан ӳс, тетĕп.

— Эс кам ачи?—ыйтнă Чапаев хĕрачаран.— Мĕн ятлă?

— Лидка ятлă. Хушаматпа—Лагутина.

Василий Иванович Лагутинсен килйышĕн историне пĕлнĕ. Павел Лагутин Уральскра шуррисене хирĕç çапăçнă. Унăн ачисем Настя ятлă инкĕшĕ патĕнче пурăннă. Инкĕшĕ хăйĕн икĕ ача тăрантарса усрамалла пулнăшăн питех савăнман: вăл вăхăтра фронт çывăхĕнчи ялсенче çăкăр çитмен.

— Э, эп сана халь палласа илтĕм. Павел Лагутин—санăн аçу-и-ха вăл?—ыйтнă Василий Иванович.

— Ă-хă.

— Ну, кĕр эппин, Лида. Санăн шăллу Григорий Павлович ман патра хăналанать.

Лида горницăна кĕнĕ те тӳрех çилĕллĕ пулса кайнă.

— Гринька, халех киле кай!—кăшкăрнă вăл шăллĕне. Шăллĕ Чапаевăн сак çинче выртакан хĕçĕ патĕнче тăнă. Вăл халь çеç унăн кĕмĕл аврине пӳрнипе тĕртсе пăхасшăн пулнă-мĕн.

— Асту, „кай“ пулмасăр!—тенĕ вăл аппăшне хирĕç хулăн сасăпа.—Тупăннă ăслăскер! Ху кай!

Василий Иванович, мăйăхĕсене пĕтĕркелесе, пӳлĕм тăрăх уткаланă, шухăшланă.

— Ну, юрĕ, Лида,—тенĕ вăл юлашкинчен.—Эсĕ пĕчĕкки пĕчĕккĕ те—çапах та çивĕч пулмалла. Отрядра сана валли ĕç тупăпăр.

Çапла вара Лида Лагутина отрядра юлнă.

Боецсем ăна часах юратса пăрахнă, „Чапай чĕппи“ тесе ят панă.

Пĕррехинче ăна каçхи хурала кайма та ирĕк панă. Çавăнта вара, çĕрле, ир еннелле, çынна уйрăмах



ыйхӑ пуснӑ вӑхӑтра, Лида нумай малта мӗлтлетекен темле мӗлкесене асӑрханӑ. Вӑл хуллен кӑна каялла, хӑйсен батальонӗ патне, упаленсе ҫитнӗ те красноармеецсене вӑратнӑ. Лешсем хӑвӑрт сиксе тӑнӑ, винтовкисене ярса тытнӑ. Тӑшмана вӗсем харӑссӑн персе кӗтсе илнӗ.

Шуррисен вара чапаевецсем ҫине ӑнсӑртран пырса тапӑнасси пӗтсе ларнӑ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн боецсем „Чапай чӗппине"—Лидӑна—тата ытларах юратма пуҫланӑ.

Анчах пӗрре вӑл Василий Ивановича ҫилентермелли ӗҫ те туса хунӑ.

Пӗррехинче Лидӑн хӑйпе илсе ҫӳренӗ йывӑҫ кашӑк хуҫӑлса кайнӑ. Нумай шухӑшласа тӑмасӑрах, вӑл пӗр казакӑн пушӑ пӳртне чупса кӗнӗ те, сӗтел ҫинчен кашӑк илсе, батальона таврӑннӑ.

Апат ҫиме ларсассӑн Чапаев унран:

— Ӑҫтан тупнӑ эсӗ кун пек кашӑк?—тесе ыйтнӑ.— Эп санӑн кашӑкна астӑватӑп, вӑл йывӑҫчӗ, ак кутимӗр.

Лида хӗрелсе кайнӑ.

— Пӳртне пӑрахса тухса кайнӑ вӗт, Василий Иванович,—тенӗ вӑл.

Василий Иванович чышкипе сӗтел ҫине ҫапнӑ.

— Лаша ҫине!—кӑшкӑрнӑ вӑл.

Мӗн хушнине вӑшт ҫеҫ тума пултарнипе Лида хӑй те мӑнкӑмӑлланнӑ. Чапаев хушнине вӑл пушшех те хӑвӑрт тума тӑрӑшнӑ.

Вӑл сиксе тӑнӑ, килхушшине чупса тухнӑ, [тепӗр минутран крыльца умне юланутпа пырса та тӑнӑ.

Чапаев ҫенӗке тухнӑ, Лида ҫине пӑхнӑ та ҫилӗллӗн хушнӑ:

— Вĕçтер, кашăка ăçтан илтĕн — çавăнта кайса хур. Чапаевец ют япалана илме пултарать-и вара? Асту, кун çинчен сана тепĕр хут каламалла ан пултăр!

Чапаев çакна каланă май хĕрелсех кайнă — çав тери çиленнĕ пулнă вăл.

Лида часрах тĕпĕртеттернĕ, казакăн пушă çуртне шыраса тупнă та кашăка хăй вырăнне хунă.

Çавăнтанпа вăл урăх пĕрре те айăпа кĕмен, „Чапай чĕппи“ тенĕ ята чыслăн упранă.

Унăн шăллĕ вара, Гриша Лагутин, аппăшĕ пекех хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара кайнă, анчах ку тепĕр вунпилĕк çултан пулнă.





## ЛЕНИН ПРИКАЗĔ

Чапаевецсем шурă казаксене çапса çĕмĕрнĕ те 1919 çул пуçламăшĕнче Колчака хирĕç похода тухнă.

Патша адмиралĕ Колчак вăл вăхăтра Çĕпĕртен Мускав еннелле пынă. Унăн питĕ пысăк çар пулнă.

Анчах та вĕсене Чапаев пыра-пыра çапнисем часах туйтара пуçланă. Колчак Белая шывĕ хыçне чакнă та шывăн çӳлĕ çыранĕнче Ĕпхӳ хули патĕнче çирĕпленсе ларнă. Шывăн тепĕр çыранĕнче, аялараххинче, Чапаев дивизийĕ тăнă.

Чапаев пĕр минута та сая яман. Боецсем пĕренесенчен сулăсем çыхнă, шыв урлă каçма хатĕрленнĕ. Темиçе кимĕ тупса пынă. Çав вăхăтрах Хĕрлĕ çыр салинчен савăнăçлă хыпар çитнĕ: унта шуррисен икĕ пăрахутне тытса илнĕ.

— Ну, халĕ Колчак тытăнса тăраймасть, — тенĕ красноармеецсенчен пĕри. — Халĕ ĕнтĕ вăл Ĕпхӳрен Çĕпĕрелле куссах каять.

Вăл малалла пăхнă. Лере, юханшыв леш енче, тем çӳлĕш хăйăрлă ту мăкăрăлса ларнă. Ун çинче çуртсем пулнă, аякран вĕсем çав тери пĕчĕккĕн курăннă. Вĕсем хушшинчен хăмăр юпа пек пушар каланчи çĕкленсе тăнă.

Чапаев хуллен кăна утса пынă та, çемçен кулкаласа, красноармеец çине пăхнă.

— Мĕнле, тăвĕ çӳлĕ-и?—ыйтнă вăл.

Красноармеец хăвăрт çаврăннă та Василий Ивановича курнă. Вăл ĕнтĕ хĕрелсе те кайнă пулнă, анчах тепĕр хут Ĕпхӳ тăвĕ çинелле пăхнă та:

— Мĕнех вара çӳлĕ пулнăшăн! Пурпĕрех Колчак çав туран çакланса юлаймĕ,—тенĕ.

Чапаевецсем тăнă çыран енне тăшман самолечĕ вĕçсе пырса каçмалли вырăна пеме тытăннă.

Шăп çав вăхăтра кунта фронт командующийĕ Фрунзе юлташ пырса çитнĕ. Вăл Ленин приказне илсе килнĕ—епле пулсассăн та Ĕпхӳ хулине илмелле, заводсемпе тата чугун çулсемпе пуян Урала Колчакран хăтармалла.

Чапаевецсем хăйсем çĕнтерессе шансах тăнă.

Чи малтан Белая урлă Хĕрлĕ çыр тĕлĕнчен Иваново-Вознесенск рабочийĕсен полкĕ каçнă. Анчах та ăна часах чарăнса тăма тивнĕ. Пулăшу, çĕнĕ вăй килсе çитессе кĕтмелле пулнă.

Çав вăхăтра Колчак наступлени пуçласа янă.

Иваново боецĕсем, тăшмантан хӳтĕленсе, патронĕсене пĕтĕмпе тенĕ пекех персе пĕтернĕ те каялла, юханшыв хĕрринелле, чакма тытăннă. Сасартăк вĕсем

патне темиҫе юланут ыткӑнса ҫитнӗ. Вӗсенчен пӗри лаша ҫинчен хӑвӑрт сиксе аннӑ, аллине винтовка тытнӑ та полк пуҫне тӑрса малалла кайнӑ. Боецсем ҫак ҫын Фрунзе иккенне палласа илнӗ.

Паттӑр ивановецсем хальхинче ҫав тери хаяррӑн тапӑнса пынӑ, колчаковецсем тӳссе тӑрайман, ҫӗнӗрен чакма тытӑннӑ.

Анчах Колчак Ӗпхӳ хулине татӑклӑ ҫапӑҫусӑр парасшӑн пулман. Юнлӑ ҫапӑҫу яра куна пынӑ. Пӗрре пӗрисем, тепре теприсем ҫӗнтерсе пынӑ.

Ҫак ҫапӑҫура Чапаева хӑрушлах амантнӑ.

Ку акӑ мӗнле пулнӑ.

Чапаевецсем вырнаҫнӑ ҫыран ҫийӗн тӑшман самолечӗ ҫаврӑнса ҫӳренӗ. Вӑл, май килнӗ таран аяла анса, пулеметран пеме тытӑннӑ. Ҫав пульӑсенчен пӗри Чапаева пуҫран тивнӗ. Унӑн ҫамки юнпа хупланнӑ. Вӑл шӳтлеме пикеннӗ: „Нимех те мар, юна сӑрӑх-



тарни маншăн усăллă“, — тенĕ, хăй вара ыратнипе шăлĕсене çыртса лартнă.

Çамкинчи пулине ултă хутчен кăларма тăнă — вăл ултă хут вĕçерĕнсе кайнă: çав тери хытă кĕрсе ларнă пулнă. Юлашкинчен, сурана çыхнă. Чапаева сывалма лазарета ярасшăн пулнă, анчах вăл килĕшмен, стройрах юлнă.

Çавăн чухне Фрунзе те чутах пĕтмен: бомба ун айĕнчи лашана вĕлернĕ, хăйне ним илтми туса хунă.

Каçхине чапаевецсем патне Ĕпхӳри пĕр рабочи фронт урлă каçса пынă. Вăл шурă генералсен калаçăвне илтме тӳр килни çинчен пĕлтернĕ. Генералсем ирхине-ирех хĕрлисене хирĕç Колчакăн чи вăйлă чаçĕсене яма шут тунă-мĕн.

Кусем, чăнах та, суйласа илнĕ чи вăйлă чаçсем пулнă — çав полксем пурте офицерсенчен тăнă, унта пĕр салтак та пулман: офицерсем çапăçава



рядовойсем пулса кайнӑ, генералӗсем командир пулса ертсе пынӑ. Вӗсен тул ҫутӑлнӑ ҫӗре, хӗрлисен позицийӗсем урлӑ каҫса, Чапаев дивизине ҫавӑрса илмелле те ӑна пӗтерсе хумалла пулнӑ.

Тӑшмана кӗтсе илме чапаевецсем ҫӗрӗпех хатӗрленнӗ. Ҫав каҫхине боецсенчен пӗри те ҫывӑрман.

Ирхине ирех офицерсен полкӗсем пирӗн позицисем патнелле пӗр сас-чӗвсӗр ҫывхарнӑ. Вӗсем ыйхӑланӑ заставӑсем патне ним систермесӗр ҫитсе тухма, ҫынсене чиксе пӑрахса пӗтерме, хӑратса тӑкма ӗмӗтленнӗ... Анчах та вӗсем пирӗн цепьсем ҫывӑхнех ҫитсен, ҫапӑҫава хатӗрленсе тӑнӑ вуншар пулеметсем пур енчен те пӗр харӑс ӗҫлеме тытӑннӑ.

Ҫав вут-ҫулӑмпа Колчакӑн чи лайӑх полкӗсене ҫулса тӑкнӑ. Офицерсен пӗр пайӗ таптаннӑ ыраш уйӗнчех выртса юлнӑ, тепӗр пайӗ тарнӑ.

1919 ҫулхи июнӗн 9-мӗшӗнче чапаевецсем Ленин приказне пурнӑҫланӑ: вӗсем Ӗпхӳ хулине илнӗ.





## ЧАПАЕВĂН ЮЛАШКИ ПОХОЧĚ

Анчах кĕрешӳ пĕтмен пулнă-ха. Кăнтăр енчен каллех тăшман çарĕсем тапăнса килнĕ. Вĕсем Уральск хулине хупăрласа илнĕ, вара Чапаев каллех вĕсене хирĕç похода тухса кайнă. Вăл шуррисене Уральск хули патĕнчен хăваласа янă та Лбищенск хулине тытса илнĕ. Лбищенск хыçĕнче йĕри-тавралла çĕршер çухрăм çеçенхир сарăлса выртнă.

Шурă казаксем каялла чакнăçемĕн хăйсен çулĕ çинче мĕн пуррине пĕтĕмпех пĕтерсе пынă. Çăлсене çĕрпе тултарнă е çынна вĕлерекен имçам ярса хăварнă, Чапаев дивизийĕнчи боецсем выçăпа тата шывсăр асапланнă. Кунта эрни-эрнипе çăкăр та илсе килеймен.

Красноармеецсем хирти тырă пĕрчисене пухнă, вĕсене чул çинче е тачанка кустăрми çинче винтовка приклачĕсемпе тĕпретсе çинĕ. Выçăпа тата шывсăр чир-чĕр пуçланнă.

Чапаевецсем пурпĕрех малалла кайнă.

Малалла хăйăрсем пуçланнă.

Шуррисем лайăх ăнланнă: малашне те чакса пырсан, вĕсен пĕтмелли çеç юлать. Хăйăрсем хушшинче лашасем валли апат та, пĕр çăвар шыв та тупаяс çук. Вара вĕсем Чапаева епле пулсан та пĕтерсе хума шут тытнă.

Уçă çапăçура çĕнтерессе шанман вĕсем. Çавăнпа та кĕтмен çĕртен çĕрле тапăнма шутланă.

Василий Иванович хăйĕн штабĕпе Лбищенскра чарăнса тăнă, дивизие мала янă. Боецсен пĕр пĕчĕк отрядне çеç хăйпе хăварнă.

Пĕррехинче вара, çĕрле, шуррисен разъезчĕсем Лбищенск патне шăппăн кăна пырса тухнă та часовойсене вĕлерсе пĕтернĕ. Разъездсем хыççăн казаксен полкĕсем пынă. Кайран акă мĕн паллă пулнă: Чапаев штабĕнче темĕнле сутăнчăк тупăнни шуррисене пулăшнă. Тахăшĕ курсантсен ротине хуралтан илнĕ пулнă.

Хăрушлăха чапаевецсем кая юлса сиснĕ — шуррисем ĕнтĕ урамсем тăрăх унталла та кунталла ыткăнса пынă.

Чапаев тумланса та ĕлкĕреймен, пĕр аллине винтовка, тепĕр аллине револьвер тытса, килкартине сиксе тухнă.

Ун тавра боецсен пĕчĕк ушкăнĕ пухăннă. Вĕсем тăшмана хирĕç пеме тытăннă.

Ку çав тери тан мар тытăçу пулнă, çапах та вăл час вĕçленмен.

Тăшмансем темиçе хут ытларах пулнă пулин те, чапаевецсем тарма шутламан. Вĕсем казак-пулеметчиксем çине тапăннă. Çак тапăну çав тери хăюллă та кĕтмен çĕртен пулнă, тăшмансем тӳссе тăраймасăр тарма тытăннă. Чапаевецсен аллине икĕ пулемет лекнĕ. Вĕсене çийĕнчех шуррисене хирĕç çавăрнă.

Тăшмансем вара тӳррĕн тапăннипе чапаевецсене парăнтарма çуккине ăнланнă.

Вĕсем, садсемпе, пахчасемпе тата килкарти хыçĕсемпе пырса, красноармеецсене хупăрлама пикеннĕ.

Шуррисем хыçа пырса тухсан, чапаевецсене чакма тивнĕ. Хирĕç пере-пере, вĕсем Урал шывĕ еннелле чакнă.

Шыв хĕррине çитме тăвалла хăпармалла пулнă. Шуррисене ку пĕтĕмпех курăнса тăнă. Сăртран тӳрех Урал хумĕсем çинелле чăнкă çыран аннă.

Урăх ниçталла чакма та вырăн пулман: пур çĕрте те тăшман пулемечĕсем ларнă.

Чапаев чи юлашкинчен, патронсем пĕтсен тин, чакнă.

Пуля унăн аллине витĕрех шăтарса тухнă. Аманнă аллипе вăл хăйĕн вĕриленсе кайнă питне шăлса илнĕ те, çамки çине юнлă йĕрсем юлнă.

Петр унран пĕр утăм та уйрăлман. Вăл Чапаев пичĕ юнланнине асăрханă та:

— Василий Иванович, пуçна çыхасчĕ...—тенĕ.

— Ман пуç тĕрĕс-тĕкелех,—тенĕ Чапаев, сăмахсене таткаласа.

Акă ĕнтĕ шыв хĕрринчи чăнкă çыран. Боецсем

Чапаева хăйăрлă чăнкă çырантан аяла, шыв хĕррине, анма пулăшнă. Темиçе çын, шуррисем килсех çитессрен, хирĕç персе тăнă.

Урал шывĕн шарлак хумĕсем çине пăхсан—чапаевецсен пурин те чун ыратса килнĕ: ывăнса çитнĕ, аманнă боецсем шыв урлă ишсе каçма пултараяс çукки, тăшман пулисенчен хăтăлаяс çукки пуриншĕн те паллă пулнă.

Анчах Чапаева епле пулсан та çăлмаллах пулнă. Тăвата боец ăна пур енчен те хӳтĕленĕ.

Вĕсенчен иккĕшне часах вĕлернĕ—шуррисен пулисем вĕсене шыв хĕррине çитсен пырса тивнĕ. Иккĕшĕ Чапаевпа юнашар ишсе кайнă.

Петр, шыв хĕрринче юлса, казаксене хирĕç персе тăнă. Пенĕ май вăл тек-текех каялла çаврăна-çаврăна пăхнă: Урал хумĕсем ăшĕнче Василий Иванович пуçĕ курăнать-и-ха?.. Пуç курăннă—Чапаев ишет иккен-ха. Сывă аллипе аран сулкаласа (тепри, аманни, пушă çанă пекех çакăнса тăнă), Чапаев вăраххăнах тăшмансенчен аяккарах кайса пынă.

Шурă казаксем шыв хĕррине пулемет сĕтĕрсе çитнĕ те ăна сăрт çине вырнаçтарнă.

Пулеметран кăларса янă черетсем шыва кăпăклантарма тытăннă. Шуррисен пулеметчикĕсем тĕрĕсрех те тĕрĕсрех тĕл илнĕ, тăкăнакан пульăсем Чапаев пуçĕ тĕлнелле çывхарнăçем çывхарса пынă.

Акă Чапаевпа юнашар ишекен боецсенчен пĕрне вĕлернĕ. Чапаев çаплах-ха малалла ишнĕ; вăл вăйсăрлансах пынă, çапах та ишнĕ-ха.

Шыв хĕрринче тăракан Петр юлашки хут каялла çаврăнса пăхнă та аллинчи винтовкине аяккалла ывăтнă: унăн патронĕсем пĕтнĕ. Тăшмансем çырантан ун пат-





нелле сикнĕ, анчах Петр хăйĕн наганне туртса кăларнă та ултă пулине тăшмансем çинелле кăларса янă, çиччĕмĕшне—хăйĕн чĕрине.

Чапаев çав вăхăтра Урал хумĕсем çинчех тытăнса тăнă-ха. Тарман вăл! Вăл, шывăн тепĕр енне каçса, çынсем пухма, унтан каллех тăшмансене пырса çапма ĕмĕтленсе ишнĕ.

Ĕнтĕ хăрушлăх та иртсе кайнă пек туйăннă. Çыран—çывăхрах. Çыран хĕрринче ешĕл хăмăшсем кашланă...

Анчах çав вăхăтра пуля ăна пуçĕнчен пырса тивнĕ...

Чапаевăн пĕр юлташĕ кăна чĕрĕ юлнă. Ку вăл Чапаевпа пĕрле Урал урлă ишсе кайнă икĕ боецран пĕри пулнă.

Юлашки пур-çук вăйне пухса, вăл çырана тухса



тăнă та каялла çаврăнса пăхнă: хыçалта Урал кĕрленĕ, унăн пăтранчăк хумĕсем çинче никам та курăнман.

Çапла вилнĕ халăх паттăрĕ Василий Чапаев.

Хĕрлĕ боецсем Чапаев вилĕмĕшĕн шуррисене часах тавăрнă. Вĕсем шуррисене шывсăр çеçенхирсем тăрăх Каспи тинĕсĕ таранах пĕр чарăнмасăр хăваланă, унта вĕсене аркатса тăкнă та Совет çĕрне тăшман çарĕсенчен тасатнă.

Унтан боецсем каллех Василий Иванович Чапаевпа пĕрле çапăçнă вырăнсемпе иртнĕ. Чапаев çуккине ĕненес те килмен вĕсен: вĕсем ăна ытла та лайăх астунă çав.

Халăх хăй чĕрĕ чух, ăна нихçан та манас çук.

Халăхĕ хăй—вилĕмсĕр.



## ЮМАХ

Иван Егорович, Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри ватă конюх, вăрăм пурнăç пурăнса ирттернĕ. Вăл кĕтӳçĕ, салтак, платник пулнă, Совет влаçĕшĕн çапăçнă та Чапаева хăйнех курнă.

Колхозри ачасем çакна пĕлнĕ. Пĕррехинче вара вĕсем Иван Егорович çумне çыпăçмаллипех çыпăçнă:

— Каласа кăтарт пире Чапай çинчен.

— Вăл путса вилнĕ тени чăнах-и, тĕрĕс-и?

Иван Егорович чаплă конюх кăна мар, вăл тата юмахсемпе юрăсем нумай пĕлнипе паллă пулнă. Вăл хăй те юмахсем итлеме юратнă, вĕсене каласа пама та юратнă.



Çав каçхине вара, ачасем ăна Чапай çинчен каласа пар та каласа пар тесе аптратсан, старик ачасен кăмăлне тунă.

—... Пачах та путман Чапай Урал шывĕнче. Ун пек пулма та пултарайман. Чапай вăл питĕ вăйлă та çивĕч пулнă. Ахальтен мар ăна ăста ишекен çын тесе шутланă. Урал урлă ишсе каçнă вăл... Анчах Урал урлă каçсан—илтет вăл: ун хыççăн хăйсен çил çунатлă лашисемпе казаксем йĕрлесе килеççĕ.

Курать Чапаев—малта, çыран хĕрринчех, хӳме пек вăрман ларать, сĕм тĕттĕм хура вăрман. Вăл вăрмана кĕрсе пытанать, анчах казаксем юлмаççĕ, çитсех пыраççĕ. Туратсем шатăртатса хуçăлни илтĕнет, учĕсем тулхăраççĕ, казаксем пĕр-пĕринпе калаçаççĕ. Чапаевăн ниçта кайса кĕме çук.

Çав вăхăтра вăл сĕм вăрманта упа йăви курать. Кĕрет те выртать çавăнта.

Казаксем ун тĕлĕнченех иртсе каяççĕ. Вара Чапаев тухать те урăх еннелле каять. Утать-утать те çеçенхире тухать. Анчах каç пулса килнĕ ĕнтĕ: хĕвел çĕр хĕрринех çитсе ларнă.

Пăхать: çеçенхирте чатăр карнă. Чатăр умĕнче—ватă кăркăс. Чапаев ăна çапла калать:

— Эпĕ —Чапаев, хĕрлĕ командир. Тăшмансенчен пытар мана.

Ватă кăркăс ăна:

— Сан çинчен илтнĕ эпĕ, вăйлă хăлатăм. Сана пĕтĕм çĕр пĕлет. Эсĕ чухăнсемшĕн çапăçнă, хăвăн пурнăçна хĕрхенмен,—тет.

Вăл Чапаева виçĕ хут чуптуса илнĕ. Унтан пĕтĕм çеçенхире илтĕнмелле шăхăрнă. Çеçенхирте лаша кĕтĕвĕ çӳренĕ. Çав кĕтӳрен пĕр ăйăр ыткăнса тухать.

Пĕр патшан та ун пек лаша пулман. Кам пĕлет, тен, ун пек лашасем патшасене тыттарман-и?

Ватă кăркăс çав йăйăра Чапаев патне çавăтса пырать:

— Ак сана урхамах, вăл сана пур инкек-синкекрен те çăлса хăварĕ.

Пăхать Василий Иванович: ун умĕнче йăйăр тăрать—вут-çулăм пек, ăмри çинче шурă çăлтăр, куçĕсем çыннăнни пек ăслă.

Юлашкинчен кăркăс Чапаева кĕмĕл хĕç тата ылтăнланă пăшал парнелет.

— Вĕçсе кай, хăвата хăлатăм. Урхамаху çине лар та вăрман тĕлĕпе сылтăмалла вĕçтер. Пилĕк каç та пилĕк кун ыткăнса пырăн эсĕ, вара урхамах сана çӳлĕ ту патне илсе çитерĕ, унта санăн стану пулĕ, унта сана никам та тытма пултараймĕ.

Ларать Чапаев хаклă йĕнер çине, ылтăнланă пăшалне хулпуççирен çакать, кĕмĕл хĕçне—пиçиххийĕ çумне. Чĕлпĕрне ярса тытать. Вара çав самантрах урхамах вăрман тĕлĕпе çил пек ыткăнать. Çĕр çийĕн тусан çеç йăсăрланса юлать...

Çав вăхăтра хĕвел çĕр хыçне ӳкнĕ, сĕм тĕттĕм каç пулса ларать. Вăрман хыçĕнчен шуррисем тухаççĕ. Пур çĕрте те ухтараççĕ вĕсем—вăрманта та, çеçенхирте те, анчах Чапаева тупаймаççĕ. Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ вĕсен? Хăйсен пуçлăхĕсем патне таврăнаççĕ те çапла пĕлтереççĕ: Чапаев Уралта путса вилнĕ, теççĕ. Авă еплерех пулнă вăл ĕçĕ...

Иван Егорович калама чарăннă.

Калавĕ çакăнпа вĕçленнĕшĕн ачасем кăмăлсăр юлнă.

— Тете, кайран мĕнле пулнă вара?

— Халӗ Чапаев ҫав ту ҫинче мӗн тăвать?

— Иван Егорович тете, кун ҫинчен кам каласа пачӗ сана?

Иван Егорович ҫемҫен кулса илнӗ вара:

— Кам каласа пачӗ тетӗр-и?.. Чапаев ҫинчен халăх каласа кăтартать. Эпӗ хам пултарнă таран сире каласа патăм. Тен, пӗтӗмпех астăваймарăм та пулӗ. Чапаев халь мӗн тăвать, тетӗн-и? Акă мӗн тăвать. Ăҫта та пулин вăйлă ҫапăҫу пырать. Апла пулсан — каллех шуррисемпе ҫапăҫаҫҫӗ. Тепӗр чух пирӗннисене те йывăр килет, ун пек те пулать. Калăпăр, вӗсене пур енчен те тăшмансем ҫавăрса илеҫҫӗ. Вăй та сахал, патронсем те урăх ҫук. Сасартăк, кӗтмен ҫӗртен, ҫавăнта Чапаев пырса тухать. Ҫиҫӗм вутлă урхамах ҫинче кайăк пек вӗҫсе пырать вăл, сывлăшра унăн бурки кăна ҫунат евӗр сарăлса пырать. Хăй кӗмӗл хӗҫӗпе сулать. „Ман хыҫҫăн, юлташсем!“ — тесе кăшкăрать те тӳрех шуррисем ҫинелле euткă-нать. Боецсене те чун кӗрет, вӗсен чӗрисем вутпа хыпаҫҫӗ, Чапаев хыҫҫăн ҫапăҫăва ыткăнаҫҫӗ. Ҫав тери хытă тураҫҫӗ, пӗр тăшман та юлмасть. Унтан кăшт лăпланаҫҫӗ те унталла-кунталла пăхаҫҫӗ, анчах Чапаев ҫук та ӗнтӗ. Тата, тӗрӗссипе каласан, унта пулнă-ши вăл? Ну, паллах ӗнтӗ, вăл пулман та. Ҫынсене хавхалантарма кăна хăшӗ те пулин: „Чапай малта!“ — тесе кăшкăрать. Унăн ятне асăнсанах, боецсем ҫапăҫăва ыткăнаҫҫӗ те тăшмана Чапаевпа пӗрле чухнехинчен кая мар тураҫҫӗ.

— Иван Егорыч тете, — ыйтнă ачасенчен тахăшӗ, — халӗ те вара шуррисемпе ҫапăҫаҫҫӗ-и?

Иван Егорович кăштах чӗнмесӗр тăнă та ҫапла ăнлантарса панă:

— Ку вăл—юмах. Анчах сире чăннипех калатăп: кашни юмахрах тĕрĕсси нумай. Ун пирки шухăшласа пăхас пулать, вара çав тĕрĕслĕх хăех курăнать...





## ЯЛАВ

Тусанлă çул хĕрринче, типсе ларнă канав тĕпĕнче, Испани батальонĕн боецĕсем выртнă. Вĕсенчен нумай малта, йывăççем хыçĕнче, хĕвел çутинче шыв йăлтăртатнă. Унта пĕчĕк юханшыв юхса выртнă.

Ирхинех çакăн пек приказ илнĕ пулнă: кăнтăрла иртни пĕр сехет тĕлне фашистсене çапса кăларса юханшыв патнелле хăваласа ямалла.

Фашистсем татти-сыпписĕр персе тăнă. Çул çинче унта та кунта тусан вĕçе-вĕçе çĕкленнĕ: унта тăшман пулисем тăкăннă. Канавран пуç çĕклеме те çук пек туйăннă—фашистсен винтовкисем вĕçĕмсĕр вут тăкнă.

Испани батальонĕнчен сылтăмра çавăн пек канавах международнăй бригада кĕрсе ларнă. Вăл бригадăра Итали, Франци, Англи, Польша, Швеци çынни-

сем пулнӑ. Тӗрлӗ ҫӗршывсенчи рабочисем, студентсем, писательсем, учительсем—тӗрӗс ӗҫшӗн, Испани халӑхӗшӗн кӗрешме инҫетрен килнисем пурте—фашистсене хирӗҫ ҫакӑнта ҫапӑҫнӑ.

Халӗ вӗсем пулеметсемпе йывӑҫсен хыҫӗнчи пӗр шурӑ ҫурт ҫинелле пеме тытӑннӑ, унта фашистсем кӗрсе ларнӑ пулнӑ. Ҫурт чӳречисене хӑмапа картланӑ, анчах ҫав хӑмасем витӗр шӑтӑксем тунӑ пулмалла, фашистсем унтан ҫул ҫине персе тӑнӑ.

Командир атакӑна кайма приказ панӑ.

Испани батальонӗпе международнӑй бригада боецӗсем, аллисене винтовкӑсем тытса, малалла ыткӑннӑ. Анчах вӗсен пӗрремӗш речӗсене фашистсен пулисем ҫулса тӑкнӑ.

Пульӑсенчен нисҫта та пытанма май пулман. Ҫӗр чавса пуҫа чикме те ҫук: кунти ҫӗр шӑрӑхпа типсе кайнӑ, ҫуркаланса пӗтнӗ, вӑл чул пекех хытӑ пулнӑ.

Тӑшман татти-сыпписӗр персе тӑнине боецсем тӳссе тӑрайман та каллех ҫул айккинелле чакнӑ.

Халӗ ӗнтӗ паллӑ пулнӑ: малалла вунӑ утӑм ҫеҫ кайсан та—вилӗмрен хӑтӑлаймӑн. Анчах тӑшман вучӗ витӗр вунӑ утӑм мар, ҫӗр аллӑ утӑм каймалла пулнӑ.

Боецсем, пуҫӗсене чиксе, ҫӗре выртнӑ.

Ҫакӑнта вара кӗтмен япала пулса иртнӗ. Малта ҫӳлӗ ялав хускалса илнӗ, ун ҫине бурка тата ҫӑмламас папаха тӑхӑннӑ ҫынна ӳкерсе хунӑ. Ку вӑл Испанин тӑваттӑмӗш батальон ялавӗ пулнӑ. Ҫапӑҫусенче паттӑр пулнӑшӑн ҫак батальон боецӗсене чапаевецсем тесе ят панӑ. Ҫавӑн хыҫҫӑн вӗсем хӑйсен ялавӗ ҫине Чапаев сӑнне ӳкерсе хунӑ.

Халь вара пурте курнӑ: хир урлӑ пӗри ҫав ялава

ҫĕклесе чупать. Ҫил ҫинче ялав пĕтĕмпех саралнӑ та, унӑн пурҫӑнĕ ҫинче Чапаевӑн ҫӑмламас папаха тӑхӑннӑ пуҫĕ курӑнса кайнӑ.

— Чапаев малта!—илтĕннĕ боецсен речĕсенче.

Ялава ҫĕклесе пыракан ҫынна кашни самантрах фашистсен пули ҫулса антарма пултарнӑ, анчах лешĕ хӑюллӑн малалла чупнӑ...

Вара боецсем, вилĕм ҫинчен мансах, ун хыҫҫӑн ыткӑннӑ.

Вĕсем пĕр чарӑнмасӑр малалла чупнӑ, вилнĕ юлташĕсен кĕлеткисем урлӑ сике-сике каҫнӑ:

— Чапаев пирĕнпе!

Фашистсем вара, хӑйсен пулемечĕсем те, юханшыв леш енчен килсе ҫитнĕ пулӑшу та хӑйсене ҫӑлас ҫуккине курса, хӑраса кайнӑ.

Республиканецсем малаллах чупнӑ, вĕсен умĕнче, ялав ҫинче, ҫутӑ куҫлӑ, ҫӑмламас буркӑллӑ ҫын портречĕ вĕлкĕшсе пынӑ.

Шурӑ ҫурт хыҫĕнчен фашистсен виҫĕ салтакĕ курӑннӑ, вĕсем хӑйсен винтовкисене ҫĕре пӑрахнӑ та аллисене ҫĕкленĕ.

Вĕсем патне, темĕн кӑшкӑрса, револьверĕпе сулкаласа, офицер чупса пынӑ, анчах республиканец пули ӑна ҫавӑнтах ҫапса антарнӑ.

Тепĕр минутран вара фашистсем вырнаҫнӑ ҫурта илнĕ. Унта кĕмелли вырӑна Испани батальонĕн боецĕсем хӑйсен ялавне тӑратнӑ.

Ун ҫине бурка тата папаха тӑхӑннӑ ҫын сӑнне ӳкернĕ пулнӑ.

---

ТУПМАЛЛИ

Вязовкăра пулса иртнĕ ĕç . . . . . . . . . . . . . . . 3
Хĕрлĕ автомобиль . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
Клинцовкăри ачасем . . . . . . . . . . . . . . . 15
Çĕрлехи калаçу . . . . . . . . . . . . . . . . . 19
Çапăçу . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 25
„Чапай чĕппи“ . . . . . . . . . . . . . . . . . 30
Ленин приказĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 38
Чапаевăн юлашки похочĕ . . . . . . . . . . . . 43
Юмах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 50
Ялав . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 56

*Для начальной школы*

**КОНОНОВ АЛЕКСАНДР ТЕРЕНТЬЕВИЧ**

**Рассказы о Чапаеве**

Переводчик
Лазарева Александра Назаровна

Перевод с издания детской литературы
Министерства просвещения РСФСР
Москва, 1954 г.

Серия „Школьная библиотека"

Редактор Ю. И. Скворцов
Художественный редактор *Л. И. Маевская.*
Технический редактор А. И. Краснов.
Корректоры *В. Г. Бурнаевский, С. Л. Баранова.*

Подписано к печати 6.II. 1957 г.
Формат 60×92 1/16. Объем 2,87 п. л.
и.—2,19 уч. изд.лис.
Заказ № 364. Тираж 5000 экз.
Цена 80 коп.

Типография № 1 Министерства культуры
Чувашской АССР
*г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.*

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР

Цена 80 коп.

А. КОНОНОВ

РАССКАЗЫ О ЧАПАЕВЕ

На чувашском языке

Чебоксары — 1957